ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН
САККУНЁ

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ТЕРРИТОРИЙЁНЧЕ ЭТИЛ СПИРЧЁ, АЛКОГОЛЬ ТАТА СПИРТ ПУР ПРОДУКЦИ ТУСА КĂЛАРАССИНЕ ТАТА УНĂН ÇАВРĂНĂШНЕ ПАТШАЛĂХ ЙЁРКЕЛЕСЕ ТĂРАССИ ÇИНЧЕН" САККУНЁН 8 СТАТЙИНЕ УЛШĂНУ КЁРТЕССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Республикин Патшалăх Канашё
2025 çулхи нарăс уйăхён 13-мёшёнче
йышăннă

1 статья

Чăваш Республикин "Чăваш Республикин территорийёнче этил спирчё, алкоголь тата спирт пур продукци туса кăларассине тата унăн çаврăнăшне патшалăх йёркелесе тăрасси çинчен" 2005 çулхи раштав уйăхён 29-мёшёнчи 69 №-лё саккунён (Чăваш Республикин Патшалăх Канашён ведомоçёсем, 2006, 66 №; 2009, 83 №; 2010, 84 №; 2012, 92 № (I том); Чăваш Республикин Саккунёсен пуххи, 2014, 5 №; 2015, 10 №; 2016, 12 №; "Республика" хаçат, 2017, чӳк уйăхён 8-мёшё; 2018, çёртме уйăхён 27-мёшё; 2020, авăн уйăхён 30-мёшё; 2021, ака уйăхён 30-мёшё; 2022, çу уйăхён 5-мёшё, раштав уйăхён 22-мёшё; 2023, утă уйăхён 19-мёшё; 2024, юпа уйăхён 16-мёшё) 8 статйине улшăну кёртес, ăна çакăн пек çырса хурас:

"8 статья. **Алкоголь продукцине ваккăн сутакан организацисен устав капиталён (устав фончён) чи пёчёк виçи тёлёшпе лартакан требованисем**

Алкоголь продукцине ваккăн сутма устав капиталён (устав фончён) виçи 250 пин тенкёрен сахал мар организацисен (Раççей Федерацийён сак-

кунĕсемпе килĕшӳллĕн Раççей Федерацийĕн Правительстви çирĕплетекен перечене кĕрекен федераци бюджет учрежденийĕсемсĕр тата обществăлла апатлану енĕпе пулăшу кӳнĕ чухне алкоголь продукцине ваккăн сутакан организацисемсĕр пуçне) право пур.".

2 статья

Çак Саккун 2025 çулхи пуш уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа вăя кĕрет.

Чăваш Республикин
Пуçлăхĕ — О. Николаев

Шупашкар хули
2025 çулхи нарăс уйăхĕн 17-мĕшĕ
2 №